26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
7
ЫТЛАРИКУН
241(6478) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Государствăна сутнă тырпула халех хатĕрлев пункчĕсене леçмелле

Колхоз хресченĕсем тăван çĕршывшăн куллен кун мухтава тивĕçлĕ, пархатарлă ĕçсем тăваççĕ. Çĕнтерӳ сехетне çывхартас тесе, вĕсем хăйсен вăй-хăватне те, пурлăхне те шеллемеççĕ. Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсем — колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшас туйăмпа хăйсем перекетленĕ тырпула государствăна сутаççĕ. 14 кун хушшинче кăна пирĕн Ленин орденлĕ республикăри колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем государствăна темиçе миллион пăт тырă сутнă.

Тăван çĕршыва тырпул вăрçă хатĕрĕсем пекех кирлĕ, эпир ăна паратпăр,—теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна 150 пин пăт тырă сутма, çав тырра декабрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлев пункчĕсене леçме сăмах панă. Вăрнарсен сăмахĕ ĕçрен уйăрăлмасть. Вĕсем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртрĕç, 150 пин пăт ытла тырра хăйсем йышăннă срокчен пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç.

Çак ответлă та кирлĕ ĕçе çавăн пек ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси, паллах, вăй хумасăр пулман. Районри партипе совет организацийĕсем, ялти пĕтĕм общественность государствăна тырă сутни вăрçăпа хуçалăх тата политика тĕлĕшĕнчен питех те паха ĕç пулса тăнине ăнланса илсе, хăйсен пĕтĕм вăйне çав ĕçе мобилизациленĕ. Районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Коротков, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташсем, коммунистсемпе комсомолецсем, активистсем колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса парас, вĕсен активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе канма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Вĕсем ĕçре хăйсем пример кăтартса пынă. Хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртнĕ хыççăн та вĕсем лăпланса лармаççĕ. Государствăна тырă сутас ĕçе пур колхозниксене те явăçтарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Государствăна тырă сутас ĕçе Тăвай районĕнче те лайăх организациленĕ. Çавна пула ĕнтĕ Тăвай районĕ государствăна сутнă 106 пин пăт тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе панă. Тырă турттарас ĕçе Çĕмĕрлепе Первомайски тата Йĕпреç районĕсем те вĕçленĕ.

Тăван çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшасси—пирĕн тивĕç,—теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Вĕсем хăйсен сăмахне ĕçпе çирĕплетсе параççĕ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ государствăна 105 пăт, Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Краснов юлташ, Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ Маркиянов юлташ 100-шер пăт, Вăрнар МТС-ĕн трактористки Арсентьева юлташ 150 пăт сутнă. Советски районри «Новая победа» колхоз членĕ С. Семенов — 60 пăт, Элĕк районĕнчи «Триер» колхоз членĕ Павлов 50 пăт сутнă. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать. Хăйсем перекетленĕ тырра государствăна темиçе 10-шар пăт сутакан колхозниксемпе колхозницăсен примерĕ колхоз хресченĕсен активлăхне çĕклеме пулăшрĕ.

Республикăри темиçе çĕр колхоз, темиçе пин колхозник, хăйсем перекетленĕ тырра государствăна сутса, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеме чĕннине ĕçпе ответлеççĕ. Анчах çакă вăл государствăна тырă сутас ĕç пур çĕрте те ăнăçлă пулса пынине пĕлтермест-ха. Хăшпĕр районсенче массăллă-ăнлантару ĕçне тивĕçлĕн организацилемен пирки государствăна тырă сутас ĕçе чылай колхозниксене явăçтарман. Унтан та ытларах, сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçсе парасси нумай районсенче тӳсме çук юлса пырать.

Хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсем государствăна тырă сутма йышăнниех лăпланса лараççĕ. Кувакино районĕнчи колхозсем государствăна 12.000 пăт тырă сутнă пулсан, çав тырра ку таранччен те хатĕрлев пункчĕсене леçсе пĕтермен. Мĕншĕн-ха унта тырă турттарас ĕç юлса пырать? Кувакино районĕнчи партипе совет руководителĕсен хăйсен начар ĕçне витме нимĕнле сăлтав та çук. Тырă турттарас ĕç кая юлса пыни пĕтĕмпех район руководителĕсем çавăрăнăçусăр, çĕршыв умĕнчи ответлăха туймасăр ĕçленипе килет. Тăвай районĕнчи пĕр «Красная Чувашия» колхоз хăй кăна государствăна 12.175 пăт тырă сутса пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă пулсан, Кувакино районĕ çавăнтан та сахалтарах тырă леçме вăхăт е тата туртăм вăйĕ тупайман иккен. Вăхăт е туртăм вăйĕ пулман пирки мар, ӳркев-сӳрĕк ĕçленĕ пирки ĕç çавăн пек япăх пырать унта.

Пăрачкавсемпе шăмăршăсем те Кувакино районĕнчен нихăш енĕпе те уйрăлса тăмаççĕ. Вăл районсенчи партипе совет организацийĕсем ВКП(б) Обкомĕ Шупашкарпа Ишлей районĕсем пирки йышăннă решенирен тивĕçлĕ выводсем туман. Çав районсенче государствăна тырă сутас ĕçе чăрмантаракансене хирĕç большевикла çирĕппĕн кĕрешмеççĕ. Ăнланас пулать: государствăна тырă сутас ĕçе чăрмантарни — çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать.

Партипе совет организацийĕсен тата ялти пĕтĕм общественноçăн паянхи хĕрӳллĕ задачи — государствăна сутнă тырра декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе парасси пулать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пымалла, тырă сутас тата леçес ĕçе чăрмантаракансене хирĕç хаяррăн кĕрешмелле. Кашни колхозра тырă турттаракан транспорт бригадисене çĕнĕрен ура çине тăратмалла, вĕсене ертсе пыма чи шанчăклă колхозниксене, коммунистсемпе комсомолецсене уйăрса лартмалла. Хатĕрлев пункчĕсенче, складсенче большевикла йĕркелĕх тăвас пулать.

Государствăна тырă сутнăшăн колхозниксемпе колхозницăсене промышленность таварĕсем сутас ĕçе йĕркелемелле. Çавăнпа пĕрлех ялсенче пур колхозниксемпе колхозницăсене те тырă сутас ĕçе явăçтарассишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Колхозниксемпе колхозницăсен нумай пинлĕ йышĕ государствăна тырă сутса, патриотла пысăк ĕç турĕ. Партипе совет организацийĕсен, ялсоветсемпе колхоз председателĕсен тивĕçĕ — çав тырра хăвăртрах хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕçе большевикла организациессипулса тăрать.

Сталинла Конституци кунĕ ячĕпе митинг пулса иртрĕ

Декабрĕн 5-мĕшĕнче Сталинла Конституци кунĕ ячĕпе Шупашкарти Заготзерно пунктĕнче митинг пулса иртрĕ. Митингра Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташсем пулчĕç.

Уяв ячĕпе пухнă митингра Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, фронтпа çĕршыв пĕтĕм вăйран пулăшса тăнине палартрĕ.

З. А. Андреева юлташ хыççăн митингра Шупашкар районĕнчи „1-ое мая" колхоз членĕ Романова юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Совет влаçĕ пире тулăх та савăнăçлă пурнăç туса пачĕ. Эпир мĕнпур пек вăя ирсĕр тăшмана çĕнтерме çĕре паратпăр,—терĕ вăл.

Сталинла Конституци кунĕ Заготзерно пунктне тырă тиенĕ лавсем нихăçанхинчен нумай килнĕ. Каçпа 8 сехет тĕлне çав кун 1.500 лав пынă, çапла вара Заготзерно пункчĕ пĕр кун хушшинче 450 тоннăна яхăн тырă йышăннă.

Антонов колхозник 50 пăт сутнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). «Шимар» колхоз пысăк мар. Çапах та вăл государствăна, 2.500 пăт тырă сутрĕ. 650 пăтне колхозниксем сутрĕç. Çак колхоз членĕ П. Антонов 50 пăт сутрĕ. Унăн ывăлĕ фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçать. «Хăвăртрах çĕнтерӳ тăвассишĕн нимĕн те шел мар», тет Антонов юлташ. Унăн примерĕпе ытти колхозниксем те 15—20-шер пăт сутрĕç.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

ГОСУДАРСТВĂНА—ТЫРĂ

Чыс та мухтав Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене!

Фронта тăтăшах пулăшу парса тăрас туйăмпа ĕçлесе, Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çулсерен çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Кăçал вĕсем уйхирти ĕçсене республикăри пур районсенчи колхозсенчен те ăнăçлăрах вĕçлерĕç. Тухăçлă тырпула тĕплĕн пухса кĕртсе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татрĕç.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче тылри ĕçсыннисене татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнчĕ. Çакăн çине ответлесе, Вăрнар районĕнчи колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна тырă сутас ĕçе те патриотла пысăк çĕкленӳпе туса ирттерчĕç. Темиçе кун хушшинче вĕсем государствăна 150.000 пăт ытла тырă сутрĕç, çавăн чухлĕ тырра пĕтĕмпех государствăн хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç.

Фронтпа тăван çĕршывшăн хĕрӳллĕн ĕçлекен Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене—чыс та мухтав!

106 пин пăт тырă сутнă

Сутнă тырра пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктне леçсе панă

ТĂВАЙ, декабрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă сутас ĕç районри колхозсенче патриотизмлă пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара малашне те вăйлăн пулăшса тăма чĕннине колхозниксемпе колхозницăсем ĕçпе ответлерĕç. Кĕске вăхăт хушшинче пирĕн районри колхозсемпе колхозниксем государствăна 106.000 пăт тырă сутса, ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Ку хисепре колхозниксем хăйсен запасĕсенчен сутнă тырă 21.246 пăт шутланать. Çапла, пирĕн районри колхозсем государствăна тырă сутма палăртнă плана ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Районри 31 колхоз государствăна сутма палăртнă тырра çиййĕнчех хатĕрлев пункчĕсене турттарса пачĕç. Пĕр «Красная Чувашия» колхоз кăна государствăна 12.175 пăт тырă сутрĕ, ăна çиййĕнчех хатĕрлев пунктне турттарса пачĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз тата колхозниксем хăйсем ĕçлесе илнĕ тырăран государствăна 12.209 пăт тырă сутрĕç.

Эпир çак çитĕнӳпе лăпланса ларма шутламастпăр, çак ĕçе малалла та сарса пыма тăрăшатпăр.

А. МОЛОСТВОВ,
ВКП(б) Тăвай райкомĕн секретарĕ.

Государствăна сутнă тырра турттарса пĕтертĕмĕр

ÇĔМĔРЛЕ. Декабрĕн 6-мĕшĕ (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна декабрĕн 4-мĕшĕнче чыслăн пурнăçларĕç. Вĕсем государствăна сутнă тырра Сталинла Конституци кунĕ тĕлне йăлтах хатĕрлев пунктне леçме пулнăччĕ. Ку ĕç районра ăнăçлăн пурнăçланчĕ. Малта пыракан „Волга", „1-ое мая", „Заря", Ленин ячĕпе тăракан колхозсем сутнă тырра икĕ-виçĕ кун хушшинчех хатĕрлев пунктне леçсе панă. Çак пысăкран та пысăк ĕçе кĕске вăхătра туса ирттерме районри партипе совет активĕ нумай пулăшрĕ. Кашни колхозрах ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн уполномоченнăйĕсем пулчĕç. Вĕсем çак ĕçе йĕркеллĕн туса пычĕç. Çавăн пекех колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе те лайăх туса пынă. Пĕр сăмахпа каласан, çак пархатарлă ĕçе ăнăçлăн вĕçлессишĕн мĕнпур пек майсемпе усă курнă.

В. ГРИГОРЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

В. М. Молотов юлташ Иранăн премьерĕпе А. Сохейли господинпа тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе М. Саэд господинпа Тегеранра калаçни

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ патĕнче пулнă. Унта вăл Иранăн министрсен совечĕн председателĕ А. Сохейли господинпа тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе М. Саэд господинпа калаçнă.

Калаçура ССР Союзĕн Иранри ĕçĕсен повереннăйĕ М. А. Максимов юлташ пулнă. (ТАСС)

Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ

Ноябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 1-мĕшĕччен Тегеранра союзлă виçĕ державăн руководителĕсен— СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн И. В. Сталин юлташăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн Ф. Д. Рузвельт господинăн, Великобританин Премьер-Министрĕн У. Черчилль господинăн—конференцийĕ пулса иртнĕ.

Конференци ĕçĕсене çаксем хутшăннă:

Совет Союзĕнчен — Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Маршал К. Е. Ворошилов.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен — Президентăн Специальнăй Помощникĕ Г. Гопкинс господин, Совет Союзĕнчи посол А. Гарриман господин, США Çарĕн Штабĕн Начальникĕ генерал Д. Маршалл, САШ-н Тинĕс Çар вăйĕсен Главнокомандующийĕ адмирал Э. Кинг, США-н Сывлăш-Çар вăйĕсен Штабĕн Начальникĕ генерал Г. Арнольд, США Çарĕн Снабжени Начальникĕ генерал Б. Сомэрвэлл, Президент Штабĕн Начальникĕ адмирал У. Леги, США-н Совет Союзĕнчи Çар миссийĕн Начальникĕ генерал Р. Дин;

Великобританирен — Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин, Совет Союзĕнчи посол А. Керр господин, Импери Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ генерал А. Брук, фельдмаршал Д. Дилл, пĕрремĕш тинĕс лорчĕ флот адмиралĕ Э. Кеннингхэм, Великобритании Сывлăш-Çар вăйĕсен Штабĕн Начальникĕ—авиацин главнăй маршалĕ Ч. Портал, Оборона Министрĕн Штабĕн Начальникĕ генерал Х. Исмей, Великобритании Совет Союзĕнчи Çар миссийĕн Начальникĕ генерал Г. Мартель.

Конференци Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешмелли çинчен тата вăрçă хыççăн виçĕ державăн пĕрле килĕштерсе ĕçлĕмелли çинчен Деклараци йышăннă, çавăн пекех тата Иран пирки те Деклараци йышăннă. Çав декларацисен тексчĕсем пичетленсе тухаççĕ. (ТАСС).

Виçĕ державăн Декларацийĕ

Эпир, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ, Великобритани Премьер-министрĕ тата Совет Союзĕн Премьерĕ, юлашки тăватă кун хушшинче пирĕн союзникĕн столицинче — Иранра тĕл пула-пула хамăрăн пĕрлехи политикăна йĕркелесе çирĕплетрĕмĕр.

Эпир çакна çирĕп шантарса калатпăр: пирĕн çĕршывсем вăрçă вăхăтĕнче те, çавăн пекех тата уй хыççăнхи мирлĕ вăхăтра та пĕрле ĕçлесе пырĕç.

Вăрçă тĕлĕшпе илсен, пирĕн çар штабĕсен представителĕсем çавра сĕтел хушшинчи пирĕн калаçусене хутшăнса пычĕç, эпир вара Германии хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтерсе тăкмалли хамăрăн плансене пĕр-пĕринпе килĕштертĕмĕр. Эпир операцисен масштабĕсемпе срокĕсем тĕлĕшпе калаçса татăлтăмăр, çав операцисене хĕвелтухăçĕнчен, хĕвеланăсĕнчен тата кăнтăртан пуçласа яма палăртрăмăр.

Эпир кунта пĕр-пĕрне ăнланса çитни пире çĕнтерӳ тума май паратĕ.

Мирлĕ вăхăт тĕлĕшпе илсен, эпир — пирĕн хушăри халыхи килĕшӳлĕх çирĕп мир туса хума май парассине шанса тăратпăр. Çĕр чăмăрĕ çинчи халăх массисен ытларахăшĕ ырласа кĕтсе илес мире туса хурассишĕн тата вăрçă инкекĕсемпе хăрушлăхĕсене нумай ăрусемшĕн сирсе ярас мире туса хурассишĕн пирĕн çине тата мĕнпур Пĕрлешнĕ нацисем çине ӳкекен пысăк ответлăха эпир пĕтĕмĕшпех йышăнатпăр.

Хамăрăн дипломатиллĕ советникĕсемпе пĕрле эпир малашлăхăн проблемисене пăхса тухрăмăр. Тиранию, чуралăха, пусмăрлăха тата пĕр-пĕрне курайманлăха сирсе ярас задачăна, пирĕн халăхсем пекех, хăйсен чĕрипе тата ăс-хакăлĕпе парăннă мĕнпур халăхсен çĕршывĕсем, пысăкки-семпе пĕчĕккисем те, пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата активлăн хутшăнса ĕçлемелле тăвассишĕн тăрăшăпăр эпир. Вĕсем демократиллĕ çĕршывсен тĕнчери çемьине хăйсем кăмăл тунă вăхăтра хутшăннине эпир саламлăпăр.

Германи çарĕсене типĕ çĕр çинче, унăн подводнăй лодкисене тинĕсре пĕтере-пĕтере тăкма тата вĕсен çар завочĕсене сывлăшран тапăнса арката-арката тăкма пире тĕнчере нимĕнле вăй та чарса тăма пултараймасть.

Пирĕн наступлени пĕр хĕрхекӳсĕр тата ӳссех пыракан наступлени пулĕ.

Хамăрăн туслă канашлăва вĕçлесе, эпир тĕнчери мĕнпур халăхсем тирани пусмăрне курмасăр, ирĕклĕ тата хăйсем харпăрхăй тĕллĕн ĕмĕтленнĕ пек, хăйсен совеçĕ хушнă пек пурăнма тытăнас кун çитессине шанса кĕтсе тăратпăр.

Эпир кунта çирĕп шанчăк хывса килтĕмĕр. Эпир кунтан хамăрăн шухăш-кăмăлпа тĕллевсем тĕлĕшпе чăн-чăн туссем пулса тухса каятпăр.

1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче Тегеранра алă пуснă.

**РУЗВЕЛЬТ.
СТАЛИН.
ЧЕРЧИЛЛЬ.**

Виçĕ держава Иран пирки йышăннă Деклараци

Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ, СССР Премьерĕ тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Премьер-Министрĕ, пĕр-пĕрнипе тата Иранăн Премьер-Министрĕпе канашласа илнĕ хыççăн, хăйсен правительствисем Иранпа çыхăну тытас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе пĕр шухăшлă пулни çинчен каласа парасшăн.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен, СССР-ĕн тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн правительствисем Иран пĕрлехи тăшмана хирĕç вăрçă вăрçма пулăшнине, пуринчен ытла ют çĕршывсенчен Совет Союзне грузсем труттарас ĕçе çăмăллатнипе пулăшнине, йышăнаççĕ.

Çак виçĕ правительство вăрçă Иран умне экономика тĕлĕшпе хăйне уйрăм йывăрлăхсем кăларса тăратнине пĕлеççĕ. Вĕсем çакăн пирки килĕшсе татăлчĕç: пĕтĕм тĕнчипе пыракан вăрçă ĕçĕсем хăйсенчен нумай вăй ыйтнине тата пĕтĕм тĕнчипех транспорт хатĕрĕсем, чĕртавар тата граждански халăха парса тăмалли япаласем çитменнине шута илсе, Иран правительствине экономика тĕлĕшпе мĕнле пулăшу пама май пур, çавăн пек пулăшăва вĕсем ĕлĕкхи пекех парса тăрĕç.

Вăрçă хыççăнхи вăхăт тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Штатсен, СССР-ĕн тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Правительствисем Иран правительствипе çакăн пирки килĕшрĕç: вăрçă пĕтнĕ хыççăн Иран умне тухса тăракан кирек мĕнле экономикăллă ыйтусене те пĕтĕмĕшпех пĕрлешӳллĕ нацисен ытти членĕсем умне тухса тăракан экономикăллă ыйтусемпе пĕрлех пăхса тухмалла, вĕсене пĕтĕм тĕнчери экономикăллă ыйтусене сӳтсе явма пухнă конференцисем е çав ыйтусене сӳтсе явма тунă пĕтĕм тĕнчери организацисем пăхса тухмалла.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен, СССР-ĕн тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн правительствисем Иранăн никама пăхăнманлăхне, унăн прависене тата унăн территорине тĕкĕнмелле маррине сыхласа хăварасшăн тăрăшнă çĕрте Иран правительствипе пĕр шухăшлă пулса тăраççĕ. Вĕсем вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕтĕм тĕнчере тăватă правительство та алă пусса кăларнă Атлантика Хартийĕн принципĕсем тăрăх мир, хăрушсăрлăх тата прогресс тăвас ĕçе мире юратакан ытти нацисемпе пĕрле Иран та хутшăнĕ тесе шанса тăраççĕ.

**ЧЕРЧИЛЛЬ.
СТАЛИН.
РУЗВЕЛЬТ.**

1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ.

У. Черчилль господин И. В. Сталин юлташа Сталинград валли хисеплĕ хĕç пани

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Тегеранра Великобританин премьер-министрĕ У. Черчилль господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа хисеплĕ хĕç панă. Çав хĕç вăл Великобритани королĕн VI-мĕш Георгăн Сталинград гражданĕсене хăйсен хулине геройла хӳтĕленĕ ятпа панă парнийĕ пулса тăрать.

Хĕç панă чухне çаксем пулнă: США президенчĕ Ф. Д. Рузвельт господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, маршал К. Е. Ворошилов, Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ А. Иден господин, Великобританин ССР Союзĕнчи послĕ А. Керр господин, Британи империйĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал А. Брук, фельдмаршал Д. Дилл, пĕрремĕш тинĕс лорчĕ флот адмиралĕ Э. Кеннингхэм, Великобританин сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ авиацин главнăй маршалĕ Ч. Портал, Великобританин оборона министрĕн штаб начальникĕ генерал Х. Исмей, Великобританин ССР Союзĕнчи çар миссийĕн начальникĕ генерал Г. Мартель, США президенчĕн специальнăй помощникĕ Г. Гопкинс господин, США çар штабĕн начальникĕ генерал Д. Маршалл тата ыттисем те пулнă.

У. Черчилль господинпа И. В. Сталин юлташ пĕр-пĕрне кĕске сăмахсем каланă.

Хĕрлĕ Çарăн тата Британи çарĕсен чаçĕсенчен хисеплĕ хурал тăратса тухнă. Çар оркестрĕ Совет Союзĕн тата Великобританин государство гимнĕсене выляса панă. (ТАСС).

И. В. Сталин юлташ Иран шахĕпе Мухаммед Реза Пехлевипе калаçни

Декабрĕн 1-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Иран шахĕ Мухаммед Реза Пехлеви патĕнче унăн Тегеранри дворецĕнче пулнă.

Шахпа Сталин юлташ хушшинчи калаçу туслăн та кăмăллăн пулса иртнĕ тата пĕр сехет хушши ытла пынă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата ССР Союзĕн Иранри ĕçĕсен повереннăйĕ М. А. Максимов юлташ пулнă. (ТАСС).

И. В. Сталин юлташ Иран премьерĕпе А. Сохейли господинпа калаçни

Декабрĕн 1-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Тегеранри Совет посольствинче Иранăн министрсен совечĕн председательне А. Сохейли господина йышăннă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ М. Саэд господин тата ССР Союзĕн Иранри ĕçĕсен повереннăйĕ М. А. Максимов юлташ пулнă. (ТАСС)

Тегеранра Великобритани премьерĕ У. Черчилль господин çуралнă куна уявлани

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 30-мĕшĕнче Великобританин Тегеранри миссийĕн çуртĕнче Великобританин премьер министрĕ У. Черчилль господин çуралнă кун ячĕпе каçхи чаплă апатлану пулса иртнĕ. Черчилль господин çав кун 69 çул тултарнă.

Каçхи апатланура Тегеранри конференцин США президенчĕ Ф. Д. Рузвельт господин тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ шуç пулса ертсе пыракан участникĕсем, çавăн пекех тата Великобританин Тегеранри миссийĕн сотрудникĕсем тата ытти хăнасем, вĕсен шутĕнче У. Черчилль господинăн хĕрĕ С. Черчилль госпожа, унăн ывăлĕ капитан Р. Черчилль тата президент Рузвельтăн ывăлĕ полковник Э. Рузвельт пулнă.

Акăлчансен йăлипе уяв хуплувĕ çинче 69 ăвăс çурта çунса ларнă.

Çавăн пекех тата советсем енчен апатланура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата Маршал К. Е. Ворошилов пулнă.

Апатлану туслă обстановкăра пулса иртнĕ. И. В. Сталин юлташпа Ф. Д. Рузвельт господин У. Черчилль господина ăшшăн саламланă, ăна ырă сывлăх тата ăнăçу суннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 4-мĕшĕнче ПРОПОЙСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — ШЕПЕРЕВО, ВЫСОКОЕ, ЛАПЕНИ, ПЕТУХОВКА, КУЗЬМИНИЧИ, СТАРАЯ БУДА, УСТЬЕ, ХОМЕНКИ, ЮШКОВИЧИ, УСУШЕК, ДОЛГИЙ МОХ, ГРАЗИВЕЦ, ХОТИЩЕ ятлă пысăк ялсем.

ГОМЕЛЬТЕН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, 30 ял ытла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче ГАДИЛОВИЧИ, ДУБРАВА, ТУРСК, ГОРОДЕЦ, ВИШЕНКИ, СВЯТОЕ, БАРАНОВКА, ГЛУШИЦА ятлă пысăк ялсем тата ХАЛЬЧ ятлă чугун çул станцийĕ.

ЧЕРКАССЫ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномет... перкчен персе тăнă.

Декабрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче тăшманăн 29 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ.

ДЕКАБРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПРОПОЙСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, унăн оборонин вăйлă çирĕплетнĕ ДВОРОВЫЙ, БОВКИ, ДОБУЖА, ятлă пункчĕсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа вăйлăн çапăçа-çапăçа, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

ЧЕРКАССЫ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн вăйлă тĕреклетнĕ ВЕТРОВКА, ИВАНКОВЦЫ, ВОЛОШИНО, ОРЛОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Темиçе кун каярах тăшман ГИНБУРГСКИ сăмсах çине десант антарнă та ФОРШТАДТ тата ПОКРОВСКИЕ ХУТОРА ятлă пунктсене йышăнса илнĕ. Пирĕн çарсем, татăклăн атакăласа, декабрĕн 5-мĕшĕнче ирпеле çав десанта пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 700 вилли тăрап выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

Декабрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 29 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 34 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Пропойск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн пехота тата артиллери чаçĕсем, тăшман хушăри оборона позицийĕсемпе усă курса хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Нимĕçсем çĕнĕрен илсе пынă вăйсемпе темиçе хут та контратака тунă, анчах вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе сире-сире янă. Совет боецĕсем тăшманăн 500 салтакĕпе офицерне, 2 артиллери батарейине тата 20 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

Пĕр ялта пирĕн подразделени нимĕçсенчен 8 тупă, 4 миномет, 13 пулемет, 100 винтовкăпа автомат тата 2 радиостанци тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, хаяррăн çапăçнă хыççăн темиçе ял тытса илнĕ. Тăшман вăйлăн персе хирĕç тăрать, час-часах контратакăсем тăвать. Пĕр чаçри подразделенисем, ăнăçлă маневр туса, нимĕçсен пĕр вăйлă çирĕплетнĕ пунктĕнчи гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Ял урамĕсенче тăшманăн 120 вилли выртса юлнă. 2 тупă, 17 пулемет тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен 70 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 13 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Черкассы районĕнче пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире янă. Пĕр участокра нимĕçсем çапăçăва 50 танкпа пĕр полк пехота кĕртсе янă. Совет подразделенийĕсем тăшмана хăйне хирĕç татăклăн пырса çапнă та малтанхи позицисем çине ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче 400 гитлеровец вилли выртса юлнă. Пирĕн пехотăн вăрçăри речĕсем хушшинче кĕрешекен артиллеристсем нимĕçсен 6 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине çунтарса янă тата 25 пулемет пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсем усăллă позицисем тытса илме хăтланнисене пурне те сирсе янă. Тăшманăн усăсăр атакисенче 500 салтакпа офицер таран вилсе юлнă. Тăшманăн 9 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа вăйлăн çапăçнă, алă вĕççĕн те тытăçа-тытăçа илнĕ, вара тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр участокра кăна 800 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата 8 танк пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупă, 19 бронетранспортерпа автомашина, боеприпассен тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕн 3 складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем нимĕçсене темиçе ялтан хĕссе кăларнă, çавăн чухне тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 6 тупăпа 24 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Куйбышев ячĕпе тăракан отрячĕ ноябрĕн 15-мĕшĕнче Пучины ятлă яла çаратакан нимĕçсене тапăннă. Фашистла вăрă-хурахсем ĕç каплах луласса пĕртте кĕтмен. Партизансем 24 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарса хăтăлнă. Çав кунах партизансем 535 метр тăршшĕ чугун çул линине сирпĕнтерсе янă, тăшманăн çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Тепĕр кунне партизансен пĕр ушкăнĕ тăшманăн çар техникине турттарса пыракан тата тепĕр эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата автомашинăсем турттарса пыракан 13 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Тăшман лагерĕнче вăрçас шухăш-кăмăлсем чанкăçемĕн чакса пыраççĕ. Çавна тыткăна лекнĕ нимĕçсем кăна мар, тăшманран тытса илнĕ документсем те лайăх кăтартса параççĕ. Çак кунсенче пирĕн чаçсем нимĕçсен 8-мĕш армийĕн командующийĕн—Веллер генералăн приказне тытса илнĕ. Çав приказра çапла каланă: „Нимĕç салтакĕсем час-часах юрăхсăр кăлаçма пуçларĕç. Тĕслĕхрен: Полтавăран чакнă чухне нимĕç салтакĕсем çапла каланă: „Днепр патне çитиччен эпир чăтма пултарăпăр, анчах та Днепр çинчи позицисене те вырăссене пама лексен, эпир алăри хĕçпăшала пăрахатпăр, мĕншĕн тесен ун чухне ку вăрçăра эпир аяла пулни уççăнах паллă пулса тăрать", тенĕ. Пĕр старши казначей хăй юлташĕсем хушшинче çапла каланă: нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем Германия çĕнтерессине текех шанмаççĕ ĕнтĕ, тенĕ. СС çарĕсен лейтенанчĕ пĕр çамрăк салтака çапла каласа кăтартнă: нимĕçсен пропаганди—пĕтĕмĕшпех суя. Вăрçă пуçламĕшĕнче çав пропаганда нимĕç халăхĕ хушшинче Германия çĕнтересси çинчен суя шанчăк сарнă, çапла вара нимĕç халăхне улталанă, тенĕ. Фронтран килнĕ пĕр ефрейтор çапла каласа кăтарнă: нимĕçсем вырăссен йышлă вăйĕсене хирĕç нимĕн те тума пултараймаççĕ, çавăнпа та нимĕç çарĕсем час часах тарма тытăнаççĕ... Нимĕçсен 8-мĕш армин командующийĕ малалла хăйĕн приказĕнче çапла хăратса çырать: салтаксене çавăн пек каласа çÿреме юраманни çинчен питĕ хытă асăрхаттарас пулать.. Малашне ун пек хăтлансан, питĕ татăклă мерăсем йышăнмалла пулать".

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Запорожье облаçĕнчи Акимовка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: „Нимĕçсем пирĕн ялта икĕ çул ытла пуç пулса пурăнчĕç. Çав хушăра фашистла çынçиенсем Акимовка ялĕнчи 100 мирлĕ çынна пĕтерчĕç. Гитлерла пуçкасакансем Александр Макарова çакса вĕлерчĕç, Николай Шелудькăна, Лида Анохисăна, Надежда Шелудькăна, Прохор Торгашева тата ыттисене те персе пăрахрĕç. Темиçе çĕр колхозникпе служащие арестлерĕç, вĕсене гестапо пÿлĕмĕсенче тискеррĕн асаплантарнă. 400 çынна яхăн оккупантсем Германие каторгăна хăваласа кайнă. Нимĕç çар влаçĕсем Ворошилов урамĕнче пурăнакан мĕнпур украинецсемпе вырăссене пÿртсенчен кăларса ывăтрĕç те унта нимĕç колонисчĕсене вырнаçтарчĕç, урамне вара „Нимĕç урамĕ" тесе ят пачĕç. Вăл урама совет çыннисем чура хуçисен урамĕ тесе ят пачĕç. Нимĕçсем çав урам тăрăх украинецсемпе вырăссене çÿреме чарса лартрĕç. Акимовка ялĕнчи комендант Бреннер панă приказ тăрăх, колхозниксем нимĕç колонисчĕсене çăнăх, сĕт, çу тата ытти апат-çимĕç те парса тăмалла пулнă. Нимĕçсем пĕтĕм ялĕпе те пĕр шкул анчах хăварчĕç. Ку шкулта нимĕç ачисем вĕренчĕç. Украинецсемпе вырăссен шкулĕсене пурне те хупса лартрĕç. Оккупаци вăхăтĕнче, уйрăмах каялла чакма тытăнсан, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем йăлтах çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Вĕсем вăтам шкула, колхозниксемпе служащисен пурăнмалли çурчĕсене нумайĕшне, сĕт-çу фермин, лаша фермин, сысна фермин, сурăх тата кайăк-кĕшĕк фермин мĕнпур хуралтисене. пăспа ĕçлекен армана тата хурт утарне сирпĕнтерсе е çунтарса ячĕç. Колхозăн темиçе вунă гектар йышăнакан илемлĕ сад пахчине гитлеровецсем йăлтах касса пĕтерчĕç".

Акт çине алă пуснă: ялсовет председателĕ А. Парий, Акимовка ялĕнчи çынсем — О. Ракицкий, Т. Решетов, М. Шелудько, Е. Макарова, Г. Никифорова тата С. Савченко.

Большевиксен партийĕн чи вăтă деятелĕ— Е. М. Ярославский

Декабрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, чылай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн, большевиксен партийĕн чи вăтă деятелĕ, парти идейисен çулăмлă пропагандисчĕ, ĕççыннисен ĕçĕшĕн хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр кĕрешекен, ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ—Емельян Михайлович Ярославский юлташ вилсе кайрĕ.

Ссылкăна янă хресчен ывăлĕ — Ярославский юлташ хăйĕн ача чухнехи çулĕсене Чита хулинче пурăнса ирттернĕ. Тăхăр çул тултарсанах унăн тара кĕрсе ĕçлеме лекнĕ.

Çирĕм çула çитсен, Ярославский юлташ революцилле кĕрешĕве хутшăнать. 1898-мĕш çулта вăл марксистла литературăпа паллашать, Байкал лешьенчи чугун çул çинче ĕçлекен рабочисем хушшинче социал-демократла пĕрремĕш кружок организацилет. Вăл, марксистла шухăшсене хÿтĕлесе, народниксене хирĕç активлăн кĕрешет.

1901-мĕш çулта Ярославский юлташ ют çĕршывсене тухса каять. Берлинпа Парижра вăл вырăс эмигрант-революционерĕсемпе çыхăнать, Российăна Иркутскпа Байкал леш енĕ валли вăрттăн литература илсе тавăрăнать. РСДРП-ăн Чита комитечĕн членĕ пулса тăрса, Ярославский юлташ чылай революцилле листовкăсем пичетлесе кăларать. Çав вăхăтра ăна арестлеççĕ. Кун хыççăн, полици пăхса тăмалла йĕркепе ирĕке кăларсан, вăл вăрттăн ĕçлеме тытăнать.

1903-мĕш çулхи кĕркуннерен пуçласа, Ярославский юлташ Петербург хулинче, Петербург комитечĕн членĕ пулса, Владимир Семенович Лапин ятпа ĕçлет. Петербургра вăл, пуринчен ытларах Невски заставăра, пропагандиста тата организаторла ĕç туса пырать.

1904-мĕш çулта, майăн 1-мĕшĕнчи демонстраципе хатĕрленнĕ чухне Ярославский юлташа арестлеççĕ те, «кресты» ятлă тĕрмене пĕччен лармалли камерăна хупса хураççĕ. Унта вăл çав çулăн вĕçне çитичченех ларать. Тĕрмерен тухсан, Ярославский юлташ Петербургра 1905-мĕш çулхи революцилле событисене активлăн хутшăнать.

Часах Ярославский юлташ Тула хулине куçать, анчах кунта нумаях ĕçлеймест — Центральный Комитет хушнă тăрăх, ытти агитаторсемпе пĕрле вăл Атăл тăрăхĕнчи хуласене — Костромана, Чулхулана, Ярославле каять. 1905-мĕш çулхи октябрь, ноябрь тата декабрь уйăхĕсенчи революцилле хĕрÿллĕ кунсенче Ярославский юлташ Ярославль хулинчи рабочисен руководителĕсенчен пĕри пулнă. Вăл хутшăннипе Ярославльти Корзинкин тăванĕсен Пысăк мануфактуринче (халĕ «Красный Перекоп» фабрики) вăйлă стачка пулса иртет.

Таммерфорсри конференци хыççăн Ярославский юлташ Мускава ĕçлеме куçать, кунта вăл партин Мускав комитечĕн составне кĕрет. Ярославский юлташ çар организацине тунă çĕре хутшăнать тата «Жизнь солдата» ятлă журнал кăларса тăрать.

1906-мĕш çулхи çуркунне Ярославский юлташа арестлесе полицин сущевски çуртне хупса лартнă. Унтан, вăл тарнă. Ун хыççăн Ярославский юлташ Ярославльри парторганизаци мандачĕпе Стокгольма партин 4-мĕш съездне каять. Съезд хыççăн Центральный Комитет ăна Российăн кăнтăр енне ĕçлеме ярать.

Парти хушнă ĕçсемпе чылай хуласенче пулса, Ярославский юлташ Мускавпа Петербурга таврăнать, салтаксем хушшинче ĕçлет, большевиксен «Казарма» ятлă çар хаçатне редакцилет. Ярославский юлташ партин çар тĕлĕшпе ĕçлекен боевой организацине тăвас тĕлĕшпе чи активлă ĕçлекенсенчен пĕри пулнă.

1907-мĕш çулта Ярославский юлташ партин V-мĕш съезчĕн ĕçĕсене, Петербургпа Кронштадт хулисенчи çар организацийĕсен делегачĕ пулса, хутшăнать. Съезд хыççăн ăна арестлеççĕ те 7 çуллăха каторгăллă ĕçе яраççĕ. Каторга срокне тÿссе ирттерсе, Ярославский юлташ Якутска пурăнма куçать, унта вăл ссылкăра 1917-мĕш çулччен пурăнать.

Ссылкăра Ярославский юлташ вырăнти вĕренекен çамрăксенчен икĕ вăрттăн кружок организацилет. Çав кружокран малашне пирĕн партин çирĕп работникĕсем, Якутире совет влаçне организацилекенсем ÿссе çитĕнеççĕ.

1917-мĕш çулăн варринче кăна Ярославский юлташа, ытти ссылкăнайсемпе пĕрле, Мускава пырса çитме май килет. Мускавра вăл большевиксен Мускаври организацийĕн ĕçĕсене, уйрăмах çар енĕпе, активлăн хутшăнать. Вăл большевиксен «Социал-демократ» ятлă хаçатне ертсе пыракансенчен пĕри пулнă. 1917-мĕш çулхи кĕркунне хресченсем валли кăларакан «Деревенская правда» ятлă большевикла хаçата организацилесе ертсе пырать. Аслă штурмăн асран кайми кунĕсенче, 1917-мĕш çулхи Октябрьте, Ярославский юлташ Мускаври военно-революционнăй комитетăн составне кĕнĕ.

Большевиксен партийĕн çулăмлă пропагандисчĕ пулса тăрса, Ярославский юлташ Ленинпа Сталинăн аслă идейисене халăхсем хушшинче сарнă, рабочисемпе хресченсене тата салтаксене влаçа ĕççыннисен аллине тытса илме хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăннă.

Подпольщик-большевикăн Ярославский юлташăн ĕçĕ пултаруллă та нумай енлĕ пулнă. Ярославский юлташăн ĕçĕ совет влаçĕ çĕнтернĕ хыççăн та пысăк вырăн йышăнса тăрать.

1918-мĕш çулта Ярославский юлташа Мускав çар округ комиссарĕн помощникĕ, унтан вара комиссар пулса ĕçлеме уйăрса лартнă. 1920-мĕш çулта вăл Уралта тата Çĕпĕрте ĕçленĕ. 1921-мĕш çулта ăна Центральный Комитет членне тата РКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлеме суйланă.

1923-мĕш çултан пуçласа Ярославский юлташ, Ленин планĕ тăрăх урăхлатса йĕркеленĕ центральнăй контрольнăй комиссире, унăн секретарĕ пулса ĕçлет. СССР Центральный Исполнительный Комитечĕн членĕ, СССР РКИ Халăх Комиссариачĕн коллеги членĕ, «Большевик» журналăн редколлеги членĕ, Ленин институчĕн дирекци членĕ, — çакăн пек ĕнтĕ вăтă большевикăн нумай енлĕ ĕçĕ.

Партин XVII-мĕш съездĕнче Ярославский юлташа ЦК ВКП(б) çумĕнчи парти контроль комиссийĕн членне суйлаççĕ.

Ярославский юлташăн пурнăçĕ большевикла партин пурнăçĕпе тата кĕрешĕвĕпе таччăн çыхăнса тăрать. Ленин-Сталин аслă партийĕн çирĕп боецĕ пулса тăрса, Ярославский юлташ оппортунистсене хирĕç, рабочи класăн мĕнпур тăшманĕсене—меньшевиксенчен пуçласа троцкистла-бухаринла шпионсем патне çитиччен мĕнпур тăшмансене хирĕç хĕрÿллĕн те çирĕппĕн кĕрешнĕ.

Ярославский юлташ хăйĕн нумай çул хушшинчи революцилле ĕçĕпе пирĕн çĕршыври ĕççыннисем умĕнче пысăк хисепе тухрĕ. Ăна мĕнпур ĕççыннисем ăшшăн юратаççĕ. Ярославский юлташа Омск облаçĕнчи ĕççыннисем СССР Верховный Совечĕн депутатне суйларĕç. Вăл 60 çул тултарнă май тата унăн рабочи класпа хресченсем умĕнчи революцилле тава тивĕçлĕ ĕçне шута илсе, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1938 çулхи февраль уйăхĕнче Е. М. Ярославский юлташа Ленин орденĕпе наградăларĕ.

Партин XVIII-мĕш съездĕнче Ярославский юлташа ВКП(б) Центральный Комитечĕн членне суйланă. Юлашки çулсенче вăл ВКП(б) Центральный Комитетĕнче ĕçленĕ, лекторсен группине ертсе пынă, çакăнпа пĕрлех вăл «Правда» хаçат редакцийĕн ĕçне, унăн редколлеги членĕ пулса тăрса, активлăн хутшăнса пынă.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Ярославский юлташ, Ленин-Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ, хăйĕн мĕнпур вăйне пĕтĕм халăх нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан кĕрешĕве парать. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех вăл «Правда» хаçатра совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен хĕрÿллĕ статья çырса кăларать. Унта вăл пирĕн тăван çĕршыва ултавлăн тапăнса кĕнĕ гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç отпор памашкăн халăха пĕтĕм вăйсене мобилизацилеме чĕнет.

Вăрçă вăхăтĕнче Ярославский юлташ темиçе çĕр докладпа лекци туса ирттерет. Вăл Донбаспа Кузбасс шахтерĕсем умĕнче, Урал, Мускав, Иваново, Горький ĕççыннийĕсем умĕнче туха-туха калать. Вăл фронтăн малти линийĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе, офицерĕсемпе калаçать. Вăл пирĕн çĕршыв умĕнче радио тăрăх нумай хутчен сăмах тухса калать. Ленин-Сталин аслă партийĕн идейисене массăсем патне çитерекен статьясем темиçе вуншăрăн çырса кăларать. Çав статьясенче çулăмлă совет патриотизмĕ, пирĕн тĕрĕс ĕç татăклăн çĕнтересси çинчен çирĕппĕн шанни ялкăшса тăрать.

Пропагандистпа публицистăн хĕрÿллĕ ĕçне Ярославский юлташ наукăри пысăк ĕçпе çыхăнтарса пынă. СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕ, «Историллĕ журналăн» редакторĕ, ЦК ВКП(б) çумĕнчи партиллĕ аслă шкулти ВКП(б) историйĕн кафедрине ертсе пыраканĕ, «ССР Союзĕнчи граждан вăрçи историйĕн» иккĕмĕш томне çыраканĕсенчен тата унăн редакторĕсенчен пĕри, Сталинла премин лауреачĕ—çакăн пек ĕнтĕ большевик-ученăйăн сăн-сăпачĕ.

Йывăр чир ăна вырăн çумне çыхса хунă пулин те, Е. М. Ярославский юлташ ылханлă тăшмана çĕнтерессишĕн политикăлла активлă ĕçе юлашки кунĕ çитиччен пăрахман. Юлашки кунсем çитсен, вилес умĕн те, асаплă чирпе кĕрешсе, Ярославский юлташ «Правда» тата «Красная Звезда» хаçатсем валли—Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнин çинчен тунă историллĕ докладĕ пирки пысăк статья çырса панă.

«Правда» хаçатăн декабрĕн 2-мĕшĕнчи номерĕнче тухнă статьян юлашки хавхаланулла йĕркисенче вăл çапла çырнă: «...Ленин-Сталин партийĕ, большевиксен партийĕ—пире саманан чи пархатарлă идейисемпе хĕçпăшаллантарнă парти, мĕнпур совет халăхне кĕрешме тата çĕнтерме хавхалантарса, организацилесе пыракан парти ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр...

Пурте ывăнма пĕлмесĕр çакăншăн кĕрешер, пиртен кашни вара çапла калама пултартăр: «Çапла, тăван çĕршывшăн пыракан аслă кĕрешÿ ĕçĕнче манăн пĕчĕк тÿпе те пулин пур. Çĕнтерÿĕн хавасла кунне çывхартас тесе, эпĕ хамăрăн аслă совет çĕршывĕн патриочĕ пулса тăрса, мĕн тума пултарнине тата мĕн тума тивĕçлине пурне те турăм. Аслă Сталин ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар гитлерла вăрă-хурахсене пĕтерсе тăкас ĕçе çывхартнă вăхăтра, хамăрăн саманана тивĕçлĕ пулас тесе эпĕ мĕн кирлине пурне те турăм».

Большевик Емельян Ярославский халăхшăн хĕрÿллĕ те пултаруллă пурнăç пурăнса ирттерчĕ.

Мĕн çамрăкран пуçласа хăйĕн чаплă пурнăçĕн вĕçне çитиччен хăйĕн мĕнпур вăй-хăватне ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешнĕ çĕре панă Ярославский юлташ халăхшăн, тăван çĕршывшăн паттăррăн та мухтавлăн кĕрешнин тĕслĕхĕ, большевиксен партине, унăн историллĕ ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса ĕçленин тĕслĕхĕ пулса тăрать.

Çакăн пек ĕнтĕ çулăмлă большевикăн, Ленин-Сталин партийĕн аслă ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, унăншăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ Емельян Михайлович Ярославскин çутă сăн-сăпачĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ укçапа ялаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене ăнăçлăн сарнăшăн тата билет укçисене çийĕнчех пухса пĕтернĕшĕн çак юлташсене премисем панă:

Сĕнтĕрвăрри районĕ тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Анкудинов юлташа—1000 тенкĕ, райсберкасса заведующине Веселов юлташа—800 тенкĕ, сберкассăн главнăй бухгалтерне Филиппова юлташа—500 тенкĕ;

Вăрмар районĕ тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Яковлев юлташа—1000 тенкĕ, сберкасса заведующине Трофимов юлташа—800 тенкĕ, сберкассăн главнăй бухгалтерне Елисеева юлташа —500 тенкĕ;

Шупашкар районĕ тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Алексеев юлташа—800 тенкĕ, сберкасса заведующине Степанов юлташа — 800 тенкĕ;

Ишлей районĕ тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Абрамов юлташа—1000 тенкĕ, сберкасса заведующине Петров юлташа — 800 тенкĕ;

Октябрьски район тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Егоров юлташа—800 тенкĕ, сберкасса заведующине Чупраков юлташа — 800 тенкĕ;

Канаш районĕ тăрăх: районти финанс отделĕн заведующине Тарасов юлташа—1000 тенкĕ, сберкасса заведующине Самойлова юлташа—800 тенкĕ;

Шупашкар хули тăрăх: финанс отделĕн заведующине Пропокьева юлташа—1000 тенкĕ, Центральнăй перекет касси заведующине Кудрявцев юлташа—1000 тенкĕ;

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн тата перекет кассисен Управленин работникĕсене Авдеева, Михайлов, Пудников юлташсене — 750-шер тенкĕ, Зиновьева юлташа — 600 тенкĕ панă.

Физкультурăпа спорт сезонĕ пуçланас умĕн

Шупашкарти ВКП(б) хула комитечĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, декабрĕн 12-мĕшĕнче физкультурăпа спортăн хĕллехи сезонĕ уçăлмалла. ВКП(б) хула комитечĕ хулари пур физкультура обществисене те çак сезона хатĕрленме кăтартусем панă.

«Сталинец» спорт обществи, хĕллехи сезона хатĕрленнĕ май, каток тума тытăнчĕ. «Красный мебельщик» артельре ĕçлекен çамрăксем 100 мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрлерĕç.

Хулари пур предприятисемпе учрежденисенчи спорт обществисем те хĕллехи сезона кăтартуллăн ирттерме тăрăшаççĕ.

Анчах та ВЛКСМ хула комитечĕ тата физкультурăпа спорт ĕçĕн инспекторĕ çителĕклĕ ĕçлемесç. Физкультурăпа спорт ĕçĕн инспекторĕ Филичкина юлташ çак ĕç канашлусем туса ирттернипех пуласса шанать пулмалла.

Ф. МАЛЫШКИН.

Чăх-чĕпсене юратса пăхать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кĕчкей ялсоветĕнчи «Красный корт» колхозăн чăх-чĕп ферминче Раиса Андреева ĕçлет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа туса пырать. Чăхсене вăхăтра апат парать, шăварать, ферма çуртне яланах таса та тирпейлĕ тытать.

Ĕçчен çын пур ĕçе те ĕлкĕрет. Вăлах ферма заведующийĕ, чăх-чĕп пăхаканĕ тата хуралçă пулса ĕçлет. Çапла вара пĕр пĕччен виçĕ çыншăн ĕçлет.

Фермăра 40 чăх. Вĕсенчен кăçал 3021 çăмарта илнĕ. Планпа кашни чăхран 70-шер çăмарта илмелле пулнă, Андреева юлташ 75-шер çăмарта ытла илнĕ.

Колхоз чăх-чĕп ферминчен пысăк тупăш курать. Государствăна çăмарта памалли плана апрель уйăхĕнчех тултарнă. Ватăлнă чăхсен какайне государствăна панă. Вĕсен вырăнне 65 чĕпĕ çĕнĕрен ÿстернĕ. Кунсăр пуçне Вăрмарти чăх-чĕп кăларакан станцирен татах 45 чĕпĕ илсе килнĕ. Халĕ вĕсем пурте тĕрĕс-тĕкĕл пурăнаççĕ

Н. АНДРЕЕВ.

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн партикабинетĕнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекен кружоксен руководителĕсен тата пропагандистсен семинерĕ пулать. Семинар теми: **«Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн 1943-мĕш çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи 95-мĕш номерлĕ приказĕ».**

Докладчик — З. А. Купер юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1889. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6 59Х42 п. л Тираж 14.400 экз.